# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИПЕ МУЗЫКИН КЛАССИКĔ

## *Ф.Павлов çуралнăранпа 110 çул çитнĕ май*

Çутçанталăк Федор Павлова иксĕлми пултарулăх парнеленĕ. Вăл драматург та, композитор та, публицист та, тĕпчевçĕ те. Кăçалхи авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче пултаруллă çыннăмăр Федор Павлов çуралнăранпа 110 çул çитрĕ. Çураласса вăл Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел ялĕнче хресчен çемйинче 1892 çулта çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Иккасинчи икĕ класлă училищĕре вĕреннĕ, ăслăлăх çулĕпе малтанхи утăм тунă. 1907 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Унта ăс пухнă чухнех халăх пултарулăхĕн ахахмерченне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухма тытăннă. Вĕренсе тухсан вăл пĕр хушă ялта учительте ĕçлет. Кĕçех ăна хăй пĕлӳ илнĕ шкула музыка преподавателĕ пулса ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Çав çулсенче Федор Павлов музыкăпа литература ĕçне пуçăнать, чăвашла тата вырăсла сăвăсем çырать. «Йăсăркка», «Сарă хĕр», «Экспромт», «Вĕлле хурчĕ» сăвăсем унăн пирвайхи хайлавĕсем шутланаççĕ. Кашни хăйне май кăсăк. Акă, «Йăсăркка» ятлипе паллашар-ха:

Кутсăр-пуççăр çил-тăман<br>
Çавра çил пек çаврăнса<br>
Тĕнче тăрăх кустарать.<br>
Арçури пек ахăрса,<br>
Пин шăпăрпа шăлнă пек,<br>
Шурă юра вĕçтерсе<br>
Çил улать те шăхăрать...

Ку сăвăра автор çил-тăман сăнарĕ урлă 20 ĕмĕр пуçламăшĕнчи йывăр пурнăçа сăнлать.

«Экспромт», «Вĕлле хурчĕ», «Сарă хĕр» сăввисем чăваш поэзийĕнче юрату лирики вăй илсе пынине сахал сăмахпах куçа курăнмалла ӳкерсе панă. Ку сăвăç сăмах ăсти пулнинчен килет.

Куçĕ-пуçĕ çуталать,<br>
Çӳхе тути йăл кулать,<br>
Яштак пилĕк авăнать,<br>
Чăмăр кăкри хумханать.

Тепĕр сăвви те /«Вĕлле хурчĕ»/ ытарайми илемлĕ произведени. Вăл лăпкăн та ăшшăн, çын калаçнă евĕр илтĕнет.

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,<br>
Мĕншĕн эсĕ нăрлатăн,<br>
Сарă чечек тăрринче<br>
Çавăрăнса çӳретĕн?..

Каярахпа автор хăех çав сăвă тăрăх юрă кĕвĕленĕ. Кĕвĕпе сăмахĕсем юрăра çав тери килĕшӳллĕ çыхăнса пыраççĕ, чуна тыткăнлаççĕ.

Вунçиччĕмĕш çулхи революцие Ф.Павлов Шупашкар уесĕнчи Шемшерте кĕтсе илет. Ун чух вăл вулăс судйинче ĕçленĕ. Çав çулхи кĕркунне хастар чăваш каччи вулăсри учительсенчен куçса çӳрекен художество пултарулăх ушкăнĕ йĕркеленĕ. Çывăхри ялсенче спектакльсем кăтартнă, митинг-концертсем, кану каçĕсем ирттернĕ. Коллективри çынсем пĕр вăхăтрах драма артисчĕсем, хорта юрлакансем, оркестр музыканчĕсем, сăвă калакансем пулса тăнă. Ăçта шырамалла пулнă-ха вĕсем валли çĕнĕ репертуар? Çав репертуара Павлов хăех хатĕрлеме пуçланă. 1917-1918 çулсенче халăхăн «Шупашкар туйи», «Тухать-и, тухмасть-и?», «Олту», «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» тата ытти юррисене илемлетнĕ. Çав юрăсенче чăвашăн кăмăлĕ, сăн-сăпачĕ, чун-хавалĕ палăрса тăрать.

Тĕрлĕ енлĕ художник тата гражданин Ф.Павлов пултарулăх ĕçĕпе çеç пурăнман. Чăваш çĕршывĕнче çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçе çав тери хастар хутшăннă. Облаçри çутĕç пайĕн халăх музыкин секцине ертсе пырса, чăвашсем хушшинче музыка пĕлĕвне сарассишĕн, классикăллă произведенисене пропагандăлассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕ. Вăл тăрăшнипе 1920 çулта Шупашкарта музыка шкулĕ уçăлнă, чăваш хорĕ, концертсем паракан ушкăн тата Чăваш театрĕ çумĕнчи оркестр йĕркеленĕ. Ф.Павлов хăй те, дирижер пулса тата сĕрмекупăс каласа, концертсене хутшăннă. Вăл вăхăтра хорпа юрлама ăста илемлетнĕ «Йĕс таканлă», «Тăрна», «Çырма хĕрне ансассăн», «Пирĕн урам анаталла», «Линккалинкка» юрăсем халăх хушшинче анлăн сарăлнă.

Çĕнĕ пурнăç юррисем те сахал мар унăн. Вăл кĕвĕленĕ «Малалла утар», «Ай, улми», «Пирĕн униче шĕшкĕлĕх» юрăсем Тăван çĕршыва, тăван халăха мухтаççĕ. Пултаруллă композиторăн çав хайлавĕсем радиопа тăтăшах янăраççĕ, вĕсене уявсенче те юрлаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем – халăх юррисем, нациллĕ юрăсем.

Музыкăра хастар ĕçленĕ хушăрах Ф.Павлов илемлĕ литературăра та пысăк пултарулăх кăтартнă. Вăл çырнă «Судра» тата «Ялта» пьесăсем чăваш литературинче хăйсен тивĕçлĕ вырăнĕсене йышăнчĕç. Литература историне вĕреннĕ чухне вĕсем çинчен каламасăр ниепле те иртсе кайма май çук, мĕншĕн тесен вĕсем чăваш драматургийĕн никĕсĕнче тăраççĕ.

«Судра» комедие Павлов 1917-1918 çулсенче çырнă. Пьесăри тĕп геройсем – Ухтерккепе унăн Сăпани ятлă кинĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе вак-тĕвек ĕçсемшĕнех чăкăлташса чĕрре кĕрсе каяççĕ, суд умне тăраççĕ. Хут пĕлмен чухăн чăваш Ухтерккке пире пĕрре култарать, çав вăхăтрах куççуль те кăларттарать.

Унăн асаплă пурнăçĕпе мĕскĕнлĕхне курсан, ăна чĕререн хĕрхенес килет. Кунта драматург пусмăр саманине, кивĕ пурнăç йăли-йĕркине хытах питлет. Вăл вăхăтра Ухтерккепе Сăпани пек сăнарсем кашни ялтах пулнă. Автор вĕсене хăйĕн комедийĕнче тĕрĕс кăтартса панă. Çырасса ăна халăх калаçакан илемлĕ, пурте ăнланмалла чĕлхепе çырнă. Комедири ытти сăнарсем те хăйне евĕрлĕ: автор вĕсен чунне-кăмăлне, ăснепуçне чăн-чăн илемлĕх мелĕсемпе уçса пама пултарнă.

«Ялта» драма вара татах та тарăнтарах шухăшлаттаракан пысăк калăплă произведени. Кунта пĕрремĕш тĕнче вăрçи кăларса тăратнă инкек- асаплăх та, ял халăхĕн хуйхи-суйхи те куç умĕнчех. Эпир чухăн Ванюк салтакпа унăн арăмне Елюка, çав ахăрсамана серепине кĕрсе ӳкнĕскерсене, вĕсен телейсĕр юратăвĕшĕн чĕререн хĕрхенетпĕр. Куштан та сĕмсĕр Çтаппанпа ун тавра явăçса ашкăнакансем вара пире чунтан кӳрентереççĕ, тарăхтараççĕ. Кĕскен каласан, пусмăрпа танмарлăх тĕнчи таса чунлă çынсен пурнăçне аркатнине çак драмăра лайăх кăтартнă.

Федор Павлов хăйĕн сăввисене, юррисене, пьесисене çырнă чухне чăваш халăх творчествипе анлăн усă курнă. Унăн ĕçĕсем – тăван культура пуянлăхĕ, вĕсем паян кун та пире иртнĕ вăхăта тĕплĕнрех пĕлме, илеме туйма пулăшаççĕ.

Талантлă композиторăн тата драматургăн ĕмĕрĕ вăрăм пулман. Вăл 1931 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнче 39 çулта вилнĕ. Çак тĕрлĕ енлĕ ăстана чăваш халăхĕ нихăçан та манмĕ, ăна ĕмĕр-ĕмĕрех асра тытĕ. Чăваш халăх поэчĕ Васлей Давыдов-Анатри халалланă сăвă йĕркисем тӳрре килĕç:

Иртсе пырĕç кунсем, иртсе<br>
пырĕç çулсем,<br>
Йышлă пулĕç пирте чапа тухнă<br>
çынсем.<br>
Анчах халăх, çĕршыв манас çук<br>
ĕмĕрне:<br>
Манас çук ĕмĕрне<br>
Хветĕр Павлов ятне.

Хветĕр Павлов утать юрăçсен<br>
ретĕнче,<br>
Пурăнать çыруçсен чи малти<br>
йышĕнче.<br>
Унăн ячĕ сӳнмест, çăлтăр пек<br>
ялкăшать,<br>
Ун тупри Чăвашьен чунĕнче<br>
упранать.

Чăваш музыки тата литератури классикĕн пултарулăхĕпе тĕплĕнрех Чăваш патшалăх пичет архивĕнче /Кĕнеке палатинче/ паллашма пулать. Унăн ĕçĕсем, ун çинчен çырнă паха материалсем пирĕн патăмăрта тирпейлĕн упранаççĕ.

**Елена АРЛАНОВА,**
**Чăваш Патшалăх пичет архивĕн тĕп специалисчĕ.**